27-мĕш ҫул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
АПРЕЛЬ
9
ВЫРСАРНИКУН
71 (6566) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне ЖУКОВА

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт ҫарĕсем, КАРПАТ тăвĕсем умĕнче тăшмана поражени тӳстерсе, 200 километр сарлакăшне ҫити фронтпа пирĕнпе Чехословаки тата Румыни хушшинчи государство чиккине тухнă. Каялла чакакан тăшмана хăвала са пырса, фронт ҫарĕсем СЕРЕТ хулине туртса илнĕ, ҫавăн пекех тата Румынири халăх пурăнакан ытти 30 пункта ытла йышăннă.

Хамăрăн кăнтăр-хĕвеланăҫĕнчи государство чиккине тухассишĕн пынă ҫапăҫусенче танковăй ҫарсен генерал-лейтенанчĕн КАТУКОВĂН, ЗАМЕРЦЕВ генерал-майорăн, ПРОХОРОВ генерал-майорăн, ЗАМИРОВСКИЙ генерал-майорăн тата ЛЕМАНТОВИЧ полковникăн ҫарĕсем; танковăй ҫарсен генерал-лейтенанчĕн ГЕТМАНĂН, танковăй ҫарсен генерал-майорĕн ДРЕМОВĂН тата БОЙКО подполковникăн танкисчĕсем; ВИШНЕВСКИЙ полковникăн тата РАЗУМОВСКИЙ полковникăн артиллерисчĕсем; авиаци генерал-майорĕн ГАЛУНОВĂН летчикĕсем тата СОКОЛОВ полковникăн, ТЕМКИН майорăн, ЯКОВЛЕВ майорăн саперĕсем чапа тухнă.

Тунă ҫĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, тăшмана КАРПАТ тăвĕсем умĕнче аркатса тăкассишĕн тата хамăрăн кăнтăр-хĕвеланăҫ енчи государство чиккине тухассишĕн пынă ҫапăҫусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаҫсене, «ПРИКАРПАТСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, апрелĕн 8-мĕшĕнче, 20 сехетре, пирĕн Тăван ҫĕршыв столици МУСКАВ, виҫҫĕр ҫирĕм тăвата тупăпа ҫирĕм тăвата хут пĕр харăс персе, хамăрăн кăнтăр-хĕвеланăҫ енчи государство чиккине тухнă УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронтăн паттăр ҫарĕсене Тăван ҫĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă ҫапăҫнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур ҫарсене, хамăрăн кăнтăр-хĕвеланăҫ енчи государство чиккине тухассишĕн пынă ҫапăҫусенче пулнă скерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван ҫĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн ҫапăҫса, вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕҫ захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.
1944 ҫулхи апрелĕн 8-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне КОНЕВА

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт ҫарĕсем, ЯССЫ хулинчен ҫурҫĕртерехре 170 километр сарлакĕш участокра ПРУТ шывĕ урлă каҫнă та, тăшман оборонине татса, ДОРОХОЙ хулипе БОТОШАНИ хулине туртса илнĕ, ҫавăн пекех тата тăшманпа ҫапăҫса халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла йышăннă, вара тăшман ҫарĕсене хăваласа пырса, 85 километр сарлакăш фронтпа СЕРЕТ шывĕ ҫине тухнă.

Тăшман оборонине татассишĕн тата ПРУТ шывĕ урлă каҫассишĕн пынă ҫапăҫусенче ЖМАЧЕНКО генерал-лейтенантăн, ТРОФИМЕНКО генерал-лейтенантăн, КОРОТЕЕВ генерал-лейтенантăн, ГОРЯЧЕВ генерал-лейтенантăн, МАРТИРОСЯН генерал-майорăн, БОБРОВ генерал-майорăн, МИХАЙЛОВ генерал-майорăн, МЕРКУЛОВ генерал-майорăн, КАРЛОВ полковникăн, ГИЗАТУЛИН полковникăн, КОНЕВ полковникăн, ВРОНСКИЙ полковникăн, УМАНСКИЙ полковникăн, КОЛЕСНИКОВ полковникăн, ПУТЕЙКО полковникăн ҫарĕсем; танковăй ҫарсен генерал-майорĕн БАРАУСОВĂН, СТЫЖИК полковникăн, АНДРЕЕВ полковникăн танкисчĕсем; артиллери генерал-майорĕн ЛЕБЕДЕВĂН, артиллери генерал-майорĕн ФАУСТОВĂН, МЕНТЮКОВ полковникăн артиллерисчĕсем; ТАРАНЕНКО полковникăн, ШУНДРИКОВ подполковникăн летчикĕсем тата ПЕТРОВ полковникăн, ПОНИМАШ полковникăн, ГЛЕЗЕР полковникăн, ПОКРОВСКИЙ полковникăн, БУДАРИН полковникăн саперĕсем чапа тухнă.

Тунă ҫĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, тăшман оборонине татассишĕн тата ПРУТ шывĕ урлă каҫассишĕн пынă ҫапăҫусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаҫсене «ПРУТСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, апрелĕн 8-мĕшĕнче, 21 сехетре пирĕн Тăван ҫĕршыв столици МУСКАВ, икҫĕр ҫирĕм тăвата тупăпа ҫирĕм хут пĕр харăс персе, тăшман оборонине татнă тата ПРУТ шывĕ урлă каҫнă УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронтăн паттăр ҫарĕсене Тăван ҫĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă ҫапăҫнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур ҫарсене, тăшман оборонине татассишĕн тата ПРУТ шывĕ урлă каҫассишĕн пынă ҫапăҫусенче пулнă скерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван ҫĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн ҫапăҫса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕҫ захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И СТАЛИН.
1944 ҫулхи апрелĕн 8-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АПРЕЛĔН 7-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Апрелĕн 7-мĕшĕнче пирĕн ҫарсем СКАЛА хулинчен хĕвеланăҫнерехре ҫавăрса илнĕ тăшман группировкине пĕтерсе тăкассишĕн ҫапăҫнă, ҫав группировка пирĕн ҫарсем ҫавăрса илнĕ ункăран хĕвеланăҫнелле татса тухма хăтланнине сире-сире янă. Ҫав районра апрелĕн 6-мĕшĕнче пулнă ҫапăҫусенче пирĕн ҫарсем 4.000 нимĕҫ салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă, ҫакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: «Ю-52» йышши транспорт самолечĕсем—5, тĕрлĕ калибрлă тупăсем — 17, танксем — 7, автомашинăсем — 1.400.

ТАРНОПОЛЬ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăҫнерехре пирĕн ҫарсем тăшманăн ункаленнĕ группировкине пулăшмашкăн татса кĕме хăтланакан йышлă пехотипе танкĕсен атакисене сире-сире янă.

КИШИНЕВ хули енче пирĕн ҫарсем икĕ кун хушши вăйлă ҫапăҫнă хыҫҫăн Молдаван ССР-ĕн уезд центрне—ОРГЕЕВ хулине туртса илнĕ. Ку хула нимĕҫсен КИШИНЕВ хули патне пымалли вырăнсенчи оборонин тĕреклетнĕ пункчĕ пулнă.

ОДЕССА енче пирĕн ҫарсем Одесса облаҫĕнчи БЕЛЯЕВКА район центрне туртса илнĕ, ҫавăн пекех тата тăшманпа ҫапăҫса халăх пурăнакан ытти 60 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — КАПОКЛЕЕВКА, БУДЕННОВКА, ЕРМЕЕВКА, МАНГЕЙМ, КАРСТАЛЬ (ОДЕССĂРАН 28 километр ҫурҫĕр-хĕвеланăҫнерехре), МАЯКИ, МАРИНОВКА, НОВАЯ ЗМЕТОВКА, КУБАНКА, СТАРАЯ ДОФИНОВКА, НОВАЯ ДОФИНОВКА (ОДЕССĂРАН 16 километр ҫурҫĕр-хĕвелтухăҫнерехре), ЧАБАНКА, ГРИГОРЬЕВКА ятлă пысăк ялсем тата КОШКОВО, КРЕМИДОВКА ятлă чугун ҫул станцийĕсем. Пирĕн ҫарсем РАЗДЕЛЬНАЯ хулинчен ҫурҫĕртерехре ҫĕмĕрсе тăкнă 5—6 дивизин юлашкийĕсенчен тăракан нимĕҫ ҫарĕсен чылай пысăк ушкăнне ҫавăрса илнĕ те пĕтерсе пыраҫҫĕ. Апрелĕн 6-мĕшĕпе 7-мĕшĕнче ку районра ҫапăҫу хирĕнче нимĕҫсен 5.000 вилли ытла выртса юлнă. 1000 нимĕҫ салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ. 64 тупăпа 24 танк тытса илнĕ. ВЕСЕЛЫЙ КУТ станцийĕнче пирĕн ҫарсем тĕрлĕ пурлăх тиесе лартнă 1.100 вагон тытса илнĕ. Вĕсенчен 74 вагон—снарядсем, 31 вагон—авиабомбăсем, 81 вагон—выльăх апачĕ, 50 вагон—нимĕҫсем Одессăран Германие турттарса найма хатĕрленĕ завод оборудованийĕ тиесе лартнăскерсем пулнă. Малтанлăха пухнă даннăйсем тăрăх, РАЗДЕЛЬНАЯ хулипе чугун ҫул узелне туртса илнĕ чухне пирĕн ҫарсем ҫакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: тупăсем 44, вĕсенчен 12-шĕ йывăр тупăсем, паровозсем—17, ҫар пурлăхĕ тиенĕ вагонсем—500, складсем—3, чугун ҫул эшалонĕсем—5, вĕсенчен пĕр эшалонĕ—тупăсемпе танксем тиесе лартнăскер, инĕ эшелонĕ—аманнă нимĕҫ салтакĕсемпе офицерĕсене лартнăскер пулнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн ҫапăҫнă.

Апрелĕн 6-мĕшĕнче пирĕн ҫарсем мĕнпур фронтсенче нимĕҫсен 40 танкне ҫĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри ҫапăҫусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 45 самолетне персе ӳкернĕ.

Май уявĕ умĕнхи ăмăрту

Ĕҫ тухăҫлăхне 10 процент ӳстеретпĕр

КАНАШ. Пирĕн коллектив кашни уйăхрах производство планне ытлашшипех тултарса пырать. Ҫак кунсенче пур цехсенче те Мускаври станоксем тăвакан Ленин орденлĕ «Красный Пролетарий» завод коллективĕ Совет Союзĕнчи промышленноҫпа транспорт работникĕсене май уявĕ умĕнхи ăмăртăва сарса янă чĕнсе каланине сӳтсе-яврăмăр. Кашни рабочипе работница май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, ĕҫре татах та пысăкрах ҫитĕнӳсем тума пулчĕ.

Артель коллективĕ март уйăхĕнче продукци кăлармалли плана 113,6 процент, куллен кирлĕ таварсем кăлармалли плана 127 процент пурнăҫларĕ. Уйрăмăнах март уйăхĕнче ҫĕвĕ ҫĕлекен, атă-пушмак ҫĕлекен цехсем аван ĕҫлерĕҫ. Ҫĕвĕ ҫĕлекен цех (заведующийĕ Петухов юлташ) уйăхри задание 6 кун малтан пурнăҫларĕ. Ҫак цехри стахановкăсем А. Чернова, О. Петухова юлташсем задание тăтăшах икĕ-виҫĕ хут ирттерсе тултараҫҫĕ. Ҫавăн пекех ҫыхакан цехра та ĕҫ тухăҫлăхĕ нумай ӳсрĕ. Ҫак цех март уйăхĕнче производство планне 131 процента ҫити пурнăҫларĕ. О. Кузьмина, М. Ложкина, О. Терентьев стахановкăсем кулленех икĕ сыншăн ĕҫлеҫҫĕ.

Эпир ку ҫитĕнӳсемпе лăпланса лармастпăр. Апрель уйăхĕнче продукци кăларассине 10 процент ӳстерме пулатпăр. Продукци пахалăхне лайăхлатса пыратпăр. Ку таранччен атă-пушмак ҫĕлекен цехра чылай ҫитменлĕхсем пулнă пулсан, вĕсене эпир ҫак кунсенчех пĕтеретпĕр.

Мухтавлă Хĕрлĕ Ҫар совет ҫĕрне ирĕкс кăларса пыни артельре ĕҫлекенсене чĕрре хаваслантарать. Вĕсем фронтпа ҫĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕҫне чыслăн пурнăҫлассишĕн нимĕ шеллемесĕр, пĕтĕм вăй-халран тăрăшса ĕҫлеҫҫĕ.

Май уявне хатĕрленнĕ май, пур цехсенче те агитациллĕ-ăнлантарулла ĕҫе вăйлатрăмăр. Ку тĕлĕшпе уйрăмах партин пуҫламĕш организацин секретарĕ Трофимова юлташ тăрăшса ĕҫленине палăртмалла.

Артель кăҫал фронт заказĕсене кашни уйăхрах пĕлтĕрхинчен маларах пурнăҫласа пырать.

М. КОРЧАГИН,
«Красный воин» артель правленин председателĕ.

Уяв умĕнхи стахановла вахтăна тăчĕҫ

ҪĔМĔРЛЕ. Комбинат коллективĕ, май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, хăй ҫине ҫакăн пек обязательствăсем илчĕ:

иккĕмĕш кварталта продукци хăйне ларакан хакне 2 процент чакарса, ĕҫ тухăҫлăхне 3 процент ӳстермелле;

апрель уйăхĕнче 75 ҫамрăка харпăр хăй тĕллĕн ĕҫлеме вĕрентсе ҫитермелле;

уйăх хушшинче комсомолецсемпе ҫамрăксен 16 фронтовой бригадине организацилемелле;

МТС-сем валли запаслă пайсем тумалли задание апрелĕн 10-мĕшĕ тĕлне пурнăҫламалла;

подсобнăй хуҫалăхра ҫуракине кĕске вăхăтра, ăнăҫлăн вĕҫлемелле.

Илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăҫлассишĕн пур ĕҫлекенсем те стахановла вахтăна тăчĕҫ.

Май уявне производствăри ҫĕнĕ ҫитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн кунта социализмлă ăмăрту анлăн саралчĕ.

А. СЛУЦКИЙ,
Партбюро секретарĕ.

Подсобнăй хуҫалăх ҫуракине хатĕр

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕҫлекен Ĕҫлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлă завод подсобнăй хуҫалăхра иртнĕ ҫулта та вăйлă тырпул, пахча-ҫимĕҫ туса илнĕ. Кăҫал вара ку завод подсобнăй хуҫалăхра пĕлтĕрхинчен икĕ хут ытларах пахча-ҫимĕҫ туса илме шутлать. Кăҫал вĕсен 182 гектар ҫине тĕрлĕрен пахча-ҫимĕҫсемпе ҫуртырри акса хăвармалла.

Апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне акма пур вăрлăхсене те хатĕрленĕ. 3 тонна ҫĕрулми тăрри касса хатĕрленĕ. Пур агротехникăллă мероприятисене те пурнăҫланă. Подсобнăй хуҫалăх участокĕ ҫине 360 тонна тислĕк, 23 тонна минераллă удобрени, 4 тонна кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ кăларнă.

Ҫавăн пекех рабочисен пахча-ҫимĕҫ участокĕсенче те ҫуракине хатĕрленсе ҫитнĕ. Подсобнăй хуҫалăхран вĕсем валли 30 гектар ҫине лартмалăх ҫĕрулми уйăрса панă.

Подсобнăй хуҫалăхра пĕр тапăлмасăр 35 ҫын ĕҫлет. Кондратенко, Бахмутов, Сучкова, Маевская юлташсем ирхине ирех пуҫласа каҫченех хастарлăн ĕҫлеҫҫĕ.

— Подсобнăй хуҫалăх рабочисен апатҫимĕҫ базине ӳстерме пулăшать. Хамăр участокра ытларах пахча-ҫимĕҫ, тырпул туса илни рабочисен пурнăҫ условийĕсене лайăхлатма пулăшать. Ҫавăнпа та ку ĕҫ ҫине пурпи те лайăх хуҫа пек ҫавăрăнса пăхмалла,—тет подсобнăй хуҫалăхăн директорĕ Баранов юлташ.

(Хамăр информ.).

Елчĕк МТС-не ВЦСПС-па ССР Союзĕн Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссариачĕн куҫса ҫӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата 20.000 тенкĕ укҫа преми памалла тунă

ВЦСПС-па ССР Союзĕн Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссариачĕ кĕркуннепе хĕлле тата 1944 ҫулхи февраль уйăхĕнче тракторсем юсамалли плана мĕнле тултарнине пăхса тухса, Елчĕк МТС-не (директорĕ **П. А. Яшин** юлташ, старши механик **В. П. Павлов** юлташ) тракторсене юсамалли плана ирттерсе тата срокчен тултарнăшăн ВЦСПС-па ССР Союзĕн Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссариачĕн куҫса ҫӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата 20.000 тенкĕ укҫа премн памалла тунă.

* * *

Елчĕк МТС-ĕ 1943 ҫулта тракторсемпе тумалли ĕҫсен планне 105,3 процент пурнăҫларĕ, ҫав вăхăтрах 6,5 тонна горючи перекетлесе хăварнă. МТС-ри комбайнерсемпе трактористсем иртнĕ ҫул нумайĕшĕ стахановецсен ретне тăчĕҫ. Комбайнер В. В. Указов юлташ иртнĕ ҫул задание 320 процент тултарса республикăри комбайнерсен хушшинче мала тухрĕ. Г. Н. Стручков ертсе пыракан трактористсен бригади ĕҫ планне 150 процента яхăн пурнăҫланă. Елчĕк МТС-ĕн тракторисчĕсем Мясников, Спиридонов, Гордеева юлташсем, механиксем, В. П. Павлов, Каринкин юлташсем фронтри пек ĕҫлерĕҫ.

Елчĕк МТС-е тракторсем юсамалли ҫулталăкри плана февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех пурнăҫланă, тракторсене юсанă чухне кивĕ пайсене 19.005 тенкĕлĕх ҫĕнетнĕ. Юсанă тракторсене пурне те государство комиссийĕ лайăх пахалăхлă тесе йышăннă.

МТС-ĕн 1944 ҫулта тумалли ĕҫ планне ҫирĕплетнĕ. Кашни бригада тата кашни тракторист тракторсемпе мĕн чухлĕ ĕҫлемеллине, тракторсем хăҫан ăҫта пулмаллине, ĕҫ нормипе горючи расходламалли нормăсене кашни бригадир тата тракторист патне ҫитернĕ. Тракторсем пуртенĕ пекех колхозсене ҫитнĕ. Вăрҫă вăхăтĕнчи виҫҫĕмĕш ҫураки ĕҫĕсене пуҫăнма МТС коллективĕ паянах хатĕр.



Ӳкерчĕк ҫинче: Хĕрлĕ Ялавлă Елчĕк МТС-ĕн директорĕ **П. А. Яшин** юлташ
Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Канаш районĕ ҫуракине хăҫан хатĕрленсе ҫитесшĕн-ши?

Ҫураки пуҫланиччен шутлă кунсем кăна юлчĕҫ. Халь ĕнтĕ ҫуракине хатĕрленме вăхăт пур-ха тесе лăпланса лармалли вăхăтсем иртрĕҫ. Вăрлăха тасатса, шăтас пахалăхне сăнас, ялхуҫалăх машинисене юсас, ут тавраşĕсене хатĕрлес, колхозăн производствăллă тата ĕҫ планĕсене колхозниксен аслă пухăвĕнче сӳтсе-явса ҫирĕплетес ĕҫсене халех туса пĕтермелле.

Ҫураки ăнăҫлăхне вăрлăхпа туртăм вăйĕ татса параççĕ. Анчах Канаш районĕнчи пур колхозсенче те ку тĕлĕшпе ĕҫ лайăх теме ҫук-ха. Районра малта пыракан «Динамо», «Красное пламя» Доронин ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем ҫеҫ ҫуракипе тĕплĕн хатĕрленнĕ. Ҫав вăхăтрах пĕтĕм районĕпе илсен тĕпштырă вăрлăхĕсене колхозсем 91,2 процент, нумай ҫул ӳсекен курăксен вăрлăхне 32,4 процент, вăрлăхлăх ҫĕрулмине 57,0 процент ҫеҫ хывнă. Уйрăм колхозсенче кантăр вăрлăхĕ, хуратул тата ытти вăрлăхсем те ҫителĕксĕр. «Первое мая», «Красный путиловец», «Коминтерн», «Искра», Калинин ячĕпе тăракан колхозсенче хăшпĕр вăрлăхсем ҫитмеҫҫĕ. «Комбайн» колхозăн—пăрҫа 48,8 центнер тата хуратул 12 центнер, «Ударник» колхозăн—ҫĕрулми 210 центнер тата кантăр вăрлăхĕ те ҫитмеҫҫĕ.

Ҫав вăхăтрах райҫĕрĕҫ пайĕ колхозсем хушшинче вăрлăх улăштарассине. пĕрпĕрне пулăшассине кирлĕ пек йĕркелемен-ха.

«Идея Ленина» колхозăн ытлашши 10 центнер пăрҫа пур. «Комбайн» колхозăн (председателĕ Иванов юлташ) тулă ытлашши пур, анчах пăрҫа вăрлăхĕ ҫитмест. Иванов юлташ «Идея Ленина» колхоза тулăпа пăрҫа улăштарма кайсан, ăна тасатман тата акма пачах та юрăхсăр пăрҫа сĕннĕ. «Идея Ленина» колхозăн пăрҫи ҫинче шăтма тултарайман вăрлăхсем 60 процент, тĕрлĕ ҫумкурăк вăрлăхĕсем те чылай. Ҫак колхозăн председателĕ Ярандайкин юлташ «Комбайн» колхоз председательне Иванов юлташа: «Пăрҫа кирлĕ пулсан, илĕр е тасатма колхозниксене ярăр», тесе ответленĕ. Ку ĕҫ ҫинчен ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Добродушев юлташ та пĕлет. Анчах Ярандайкин юлташа ответ тыттарас вырăнне ăна ӳкĕтлесе: «Питĕ йывăр условисем ан лартăрха эсир» тесе ҫыру ҫырать.

«Комбайн» колхозăн ака ҫинче ҫитерме тата ҫавăн пекех акана тухас умĕн лашасене кантарса лайăхрах апат ҫине тăратма фураж сукпа пĕрех. Колхозăн лашисем акана тухма пачах хатĕр мар. Анчах ку тĕлĕшпе те районри организацисем колхозсене пĕрне-пĕри пулăшассипе кирлĕ пек йĕркелесе яман. Ку ĕҫе уйрăм «запискăсем» тăрăх кăна туса пыраççĕ. Сăмахран, ҫĕрĕҫпайĕн главнăй агрономĕ Кондратьев юлташ ку ĕҫе ҫакăн пек «организацилесе»:

«Красное знамя» колхоз председательне Ильина юлташа.

«Комбайн» колхоза 10 центнер фуражлăх тырă парса пулăшма ыйтатăп.

Кондратьев».

Паллах, ҫакăн пек хутсем ҫырса кабинетра ларса ĕҫе тивĕҫлипе тума ҫук. Кунта массăллă-ăнлантарулла ĕҫпе пĕрлех, райсовет исполком решенийĕ кирлĕ. Пĕрне-пĕри пулăшасси кашни колхозăн чыслă та ответлă ĕҫ пулса тăнине колхоз руководителĕсене тивĕҫлипе ăнлантарма тахçанах вăхăт ҫитнĕ ĕнтĕ.

Канаш районĕнчи уйрăм колхозниксем хăйсен патриотлă ĕҫне кăтартса пачĕҫ. Вĕсем вăрлăх ҫитмен колхозсене хăйсен запасĕсенчен вăрлăх парса пулăшас ĕҫĕн пуҫарăвне ăшă кăмăлпа йышăнса илчĕҫ. Сăмахран, «Малалла» колхоз членĕсем П. Петров, А. Петрова юлташсем 7—5 пăт, «Красное пламя» колхоз председателĕ А. Васильев—10 пăт кӳршĕри колхозсене вăрлăхлăх тырă парса пулăшрĕҫ. Анчах ҫак патриотсен пархатарлă ĕҫне районĕпех сарса яман-ха.

Калас пулать, уйрăм колхозсенче ҫуракине хатĕрленесси ытти енчен те ҫителĕксĕр пырать. «Комбайн» колхозрах ҫак вăхăта ҫитсе те вăрлăхлăх сĕллĕн пĕр пайĕпе, кантăр вăрлăхне, клевера сортласа тасатман. Колхозра икĕ сеялка пур, анчах, 4-мĕш бригадăн бригадирĕ Никитин юлташ калана тăрăх, вĕсен «пилĕк ретлĕ» сеялкăсем ҫителĕклĕ. (Пилĕк ретлĕ сеялка тесе кунта алăпа акассине калаҫҫĕ). Сеялка пур ҫинче, алăпа акас шухăшкăмăлпа пурăннин сиенĕ район руководителĕсене те паллă ĕнтĕ. Ку колхозра лашасене пăхас ĕҫе пĕтĕмпех манса кайнă. Конюх Александр Дудка лашасене тасатмасть, вĕсене чиртен сыватас пирки нимĕн те тумасть. Старши конюх Г. Андреев юлташ та хăйне шанса панă ĕҫ ответлăхне туймасть-ха.

Ҫураки Канаш районĕн ҫаврăнăҫусăр руководителĕсене кĕтмест, куллен кун ҫывхарать. Анчах кунта ҫуракине хăҫан тирĕҫлипе хатĕрленсе ҫитес тесҫĕ-ши?

В. ЯСТРЕБОВ.
(Хамăр корр.)

Ĕҫ планĕ хатĕр

СОВЕТСКОЕ. Коммунист Павел Матвеев ертсе пыракан Анат Сăнарти «Новая жизнь» колхоз ҫуракине кĕске срокра ирттерме шутлать. Ҫавна пурнăҫлас тĕлĕшпе колхоз ĕҫ планĕ туса ҫирĕплетнĕ. Плана ҫирĕплетиччен кашни бригадăри ĕҫне туртăм вăйне уйрăмăн шута илнĕ, ĕҫе планласси ҫинчен бригадăсенчи колхозниксемпе тĕплĕн сӳтсе-явнă. Ҫавна пула кунти кашни колхозник хăйĕн ҫураки вăхăтĕнчи ĕҫ вырăнне инвентарьне лайăх пĕлсе тăрать.

Иртнĕ ҫулта колхозра пĕчĕк участоксем тăрăх сапаланса ĕҫлессине хака хуманччĕ. Ҫав вăхăтрах кӳршĕри колхозсем, сдельщина йĕркине ҫирĕппĕн пăхăнса пырса, ĕҫе вăхăтра та тухăҫлăн туса ирттерчĕҫ. Кăҫал ҫакна «Новая жизнь» колхозра та шута илчĕҫ, ĕҫ планĕнче сдельщина йĕркине пăхăнса ĕҫлессине тĕплĕн палăртса хăварчĕҫ. Иртнĕ ҫулта сеялкăсемпе усă курман пулсан, кăҫал ҫĕрĕн пысăк лаптăкне машинăпа акса хăварма палăртрĕҫ. Акакансене те вĕрентсе хатĕрленĕҫ.

Ҫураки вăхăтĕнче столовăй пулать: Ун валли кирлĕ продуктсене хатĕрлесе хучĕҫ, столовăйра ĕҫлемелли ҫынсене те уйăрса хучĕҫ. Апата хирс илсе тухма йышăнчĕҫ.

Колхозăн кăҫалхи ҫуркунне пĕтĕмпе 141 гектар тырă акса хăвармалла. Ун валли вăрлăхсем ҫителĕклех пур, ҫĕрулми вăрлăхĕ те ҫитет. Машинăсемпе инвентарьсем пĕтĕмпех юсавлă. Ут таврашĕсем кашни лаша валлиех ҫитеҫҫĕ. Вĕсене юсас тĕлĕшпе уйрăм бригада ĕҫлерĕ. Ку ĕҫре уйрăмăнах К. Добровольцев, С. Винолюбов, И. Пачаров колхозниксем лайăх ĕҫлерĕҫ.

Колхоз уйхире 1.050 лав тислĕх кăларчĕ. Кĕлпе кайăк-кĕшĕк тислĕкне 100 центнер пухнă. Халĕ ĕҫ лашисене кантарма тăратрĕҫ.

Чăваш республикине Оборонăн Государственный Комитечĕн куҫса ҫӳрекен Хĕрлĕ Ялавĕпе иккĕмĕм премине памалла тунн колхозниксене татах та ҫĕнĕ ӳсĕмсем тума хавхалантарчĕ. Вĕсем кăҫал тухăҫлă тырпул туса илес тĕлĕшпе конкретнăй обязательствăсем илчĕҫ.

ЯКОВ СИГАЙ.

Ҫĕнтерӳшĕн—ҫĕнĕ вăйпа

Тăвай районĕнчи мартăн 8-мĕшĕ ячĕпе тăракан колхоз председательне фронта илсе кайсан, колхоза ертсе пыма колхозри чи примерлă комсомолеца, ĕҫ инвалидне Иван Евдокимов юлташа суйларĕҫ.

Унтан вара икĕ ҫул иртрĕ ĕнтĕ. Колхоз икĕ ҫулĕнче те ялхуҫалăх ĕҫĕсене вăхăтра, кăтартуллăн туса илнĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕҫре те пысăк ҫитĕнӳсем тунă.

Колхоз уйрăмăнах иртнĕ ялхуҫалăх ҫулĕнче пысăк ҫитĕнӳсем тунине палăртмалла. Вăрҫăччен ку колхоз нихăҫан та гектартан 10 центнертан мала тырпул туса илеймен пулсан, 1943 ҫулта вăл кашни гектар шучне вăтам шутпа 11-шер центнер ытла тырă туса илнĕ. Государство умĕнчи парăмсене срокчен пурнăҫланă.

Кунта колхозниксемпе колхозницăсем фронта хăйсен хастарлă ĕҫĕпе кăна мар, хуҫалăхра перекетленĕ укҫи-тенкипе тата тырпулне парса та пулăшаççĕ. Колхоз тата колхозниксем иртнĕ ҫулта государствăна 4.600 пăт ытла тырă сутнă. Кунта кашни колхозник государствăна 20 пăтран кая мар тырă сутнă. Колхозниксен хальхи вăхăтра государство умĕнче нимĕнле парăм та ҫук. Вĕсем 1944 ҫулшăн укҫа-тенкĕ парăмĕсене пĕтĕмпех тӳленĕ.

Иртнĕ ҫул колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана та ирттерсе тултарнă. Государствăна кăҫалхи ҫулшăн аш-какай пĕтĕмпех парса татнă тата ҫитес ҫулшăн та 4 центнер панă. Кунсăр пуҫне, нимĕҫ оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсене пĕр лаша, 3 ĕне, 6 сурăх тата 4 сысна парса пулăшнă.

Вăрҫă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене ҫĕнтерсе, колхозра ҫĕнĕ строительство ĕҫĕсем саралса пыраҫҫĕ. Иртнĕ ҫулта 40 ĕне вырнаҫмалăх ҫĕнĕ вите тата 20 пăру вырнаҫмалăх пăру вити тунă.

Колхоз халь хĕрсех вăрҫă вăхăтĕнчи виҫҫĕмĕш ҫуракине хатĕрленет. Ҫак тĕлĕшпе фронтовой уйăхлăхра кунта пысăк ĕҫсем туса ирттернĕ. Хĕлле тумалли агротехникăллă ĕҫсен планне колхоз ытлашшипех тултарнă. Вырăнти удобренисем пухассине те планри ирттерсе тултарнă. Пур культурăсен вăрлăхĕсем те ҫителĕклĕ, вĕсене тасатса сортласа, акма юрăхлă туса хунă. Ялхуҫалăх машинисем те юсавлă. 2 сеялка пур. Вĕсемпе ĕҫлеме ăста акакан ҫынсене 4 ҫынна уйăрса хунă. Ҫураки ĕҫĕсен планне те туса хатĕрленĕ. Кашни колхозник уйхир ĕҫĕсем вăхăтĕнче хăй мĕн тумаллине халех пĕлсе тăрать.

Кунта кашни колхозник ĕҫре. Шкул ачисемпе ҫамрăк пионерсем те колхоз ĕҫĕнче пăрăнса юлмаҫҫĕ. Вырăнти удобренисем пухас ĕҫе шкул ачисен вăйĕпех туса ирттернĕ. Шкул ачисем Петр Борисовпа Василий Фомин иккĕшĕ кăна 300 пăта яхăн кĕл пухнă.

Отечественнăй вăрҫăн йывăр условийĕсенче колхозăн ĕҫĕсем ҫакăн пек йĕркеллĕ, пĕр тикĕс пулса пыни чи малтанах Евдокимов юлташ колхоза пултаруллăн ертсе пыма пĕлнинчен килет. Вăл колхозра хăй хавасланса ĕҫлет, ытти колхозниксемпе колхозницăсене те ĕҫе кулленех активлăн явăҫтарать. Колхозниксем хушшинче фронтри пек ҫирĕп дисциплина туса хунă. Иртнĕ ҫулта ĕҫ кунĕсен минимумне тултарман колхозниксем пачах пулман. Кунта кашни колхозник хальхи вăхăтра Тăван ҫĕршывпа фронт умĕнчи хăйĕн тивĕҫне тĕрĕс ăнланса, пĕтĕм вăя хурса ĕҫлет.

Правительство пирĕн республикăна вăйлă тырпул туса илнĕшĕн Оборонăн Государственный Комитечĕн куҫса ҫӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата укҫан иккĕмĕш премии памалла туни колхозниксен ĕҫри хастарлăхне татах та ҫĕклентерет. Вĕсем кăҫал та вăйлăрах тырпул туса илсе ирсĕр тăшмана часрах ҫапса ҫĕмĕрме фронтпа тăван ҫĕршыва ытларах пулăшас кăмăлпа хавхаланса ĕҫлеҫҫĕ.

А. СОЛОВЬЕВ.

Всевобучăн Ишлей районĕнчи пунктĕнче

Ишлей районĕнчи всевобучăн улттăмĕш черетри вĕренĕвне тĕплĕн хатĕрленĕ. Çар ĕçне вĕренмелли пункта допризывниксем йышлăрах вырăнта—Кинеч ясоветĕнчи Шупашкарскасси ялĕнче организациленĕ. Çак ялта занятисем иртекелли суртсем, боецсем валли пурăнмалли суртсем тупнă, вĕренмелли вырăнсене суйласа илнĕ тата пăшал пемелли тир тунă. Вĕренÿре кирлĕ материалсемпе литература çителĕклĕ хатĕрленĕ. Вĕрентекенсем уйăрса хунă. Взвод командирĕсем —Отечественнăй вăрçăра пулнă сержантсем, отделени командирĕсем—всевобучăн пиллĕкмĕш черетĕнче отличнăй вĕренсе тухнă допризывниксем.

Улттăмĕш черетри вĕренÿ пуçланиччен командирсем 5 кунлăх семинарне ирттернĕ. Унта вĕсем вăрçă ĕçне вĕренмелли программăсене палланă, занятисене политмассăллă ĕçсем ирттермелли планĕсене тунă.

Всевобуч пунктĕнче 1927 çулта çуралнă допризывниксемпе виçĕ черетре вĕренеççĕ: Ку тарихчен всевобучăн 130 сехет программине пурĕ 151 çын вĕренсе пĕтернĕ. Пĕррĕмĕш срокри допризывниксем февралĕн 6-мĕшĕнче испытани тытрĕç. 71 боецран 24-ĕшĕ çар ĕçне пур енĕсемпе те «отлично» паллăсем илчĕç. Иккĕмĕш срокри вĕренÿ мартăн 7-мĕшĕнче вĕçленĕ. Пĕтĕмпе 80 боец вĕренсе тухрĕ: Вĕсенчен нумайăшĕсем лайăх пĕлÿ илнĕ.

Вĕренÿ ăнăçлăхĕ, чи малтанах, боецсен занятисене сиктерместĕр çÿренипе килет. Кунта малтанах занятисене сиктерсе çÿренисем те пулнă. Политикăллă-массăллă ĕçе вăйлатса ярсан, вăл çитменлĕхе часах пĕтерчĕç. Политработник К. Курбатов юлташ политикăллă лекцисемпе докладсене тăтăшах ирттерет, вăл кун хушши Совет Информаци Бюровĕн оперативлă сводкисене вуласа парать. Боецсене Совет Союзĕн Государственнăй гимнне юрлама вĕрентеççĕ.

Всевобуч пунктĕнче стена хаçачĕсемпе боевой листоксем йĕркеллĕ тухса тăраççĕ. Хаçат редакторĕ Н. Пугачев комсомолец хăйĕн ĕçне юратса тăвать. Вăл допризывниксене комсомола илес тĕлĕшпе те нумай ĕçлет. 1-мĕш срокра 32 çынна, 2-мĕш срокра 25 çынна комсомола илнĕ.

Всевобуч пунктĕнче çамрăксен физкультурăпа спорт енĕпе те атлантармаш лайăх майĕсем пур. ГСО, ГТО тата ПВХО кружокĕсем ĕçлеççĕ. Унта пур боецсене те явăçтарнă. Кашни боец спорт енĕпе хăйĕн нормисене панă. Пĕлтĕрхи кроса 73 çын хутшăннă. Вырăсла начар пĕлекен допризывниксене вырăс чĕлхине вĕрентеççĕ. Ку ĕçе Кинеч шкулĕнчи учительсене явăçтарнă.

Командирсем вĕренÿ пахалăхĕ çинчен ялан шухăшласа тăраççĕ. Вĕренÿ тимлĕн çавăрăнса пăхаççĕ. Вĕренĕвĕн тĕп мелĕ—кашни боецпа уйрăмăн ĕçлесси, боецсене çапăçури опыта парасси пулать. Занятисем ытларах ирĕкре иртеççĕ. Военкомат инструкторĕсем командирсене методикăллă пулăшу парсах тăраççĕ, вĕсемпе кунсерен инструктаж ирттереççĕ. Харпăрхăй тĕллĕн ĕçлемелли сехетсенче боецсене консультаци парассине йĕркене кĕртнĕ.

Всевобуч пунктĕнче вĕренÿ çапла ăнăçлă пыни военком Н. Барышев юлташ хăй çак ĕçпе интересленнипе килет. Барышев юлташ инструкторсемпе командирсен ĕçне пĕрмаях тĕрĕслесе тăрать, кирлĕ чух вĕсене пулăшать, кăтартусем парать. Час-часах занятисенче пулса, пур пек çитменлĕхсене палăртать, вĕсене мĕнле пĕтерсе пынине асăрхаса тăрать. Лайăх ĕçлекен командирсене тивĕçлипе хакласа, маланне тата пысăкрах çитĕнÿсем тума хавхалантарать.

Т. ИВАНОВ.

(«Чăваш Коммуни» корр.).

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Витебск енче). Кĕçĕн лейтенант **К. Г. Перфилов** командир пулса ертсе пыракан йывăр тупă расчечĕ тăшманăн резервсем туртарса пыракан чугун çулне перет.

Л. ДОРЕНСКИЙ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Мухтав орденĕн кавалерĕ Михаил Большов

Боевой задание пурнăçлама каяс текенсем чылай пулнă пулин те, подразделени командирĕ кама ямаллине суйласа илме васкаман. Вăл кашни саперăн пултарулăхĕпе лайăх енне виççе пăхнă. Урăхла пулма та пултарайман. Мĕншĕн тесен пысăк та ответлă задачăна пурнăçа кĕртмелле пулнă: саперсен пĕтĕм подразделени валли çул уçмалла. Çавна пула малтан тăшман оборонин малти ретне инженернăй разведка тумалла.

Командир саперсенчен пĕрне суйласа илнĕ.

— Ку ĕнтĕ кирек епле пулсан та заданине пурнăçлатех,—шухăшланă вăл хăй ăшĕнче.

Тепĕр минутранах командир умне луттарах пÿллĕ патвар çамрăк чăваш халăхĕн хăюллă ывăлĕ, старшина Михаил Большов пырса тăнă. Çакă пулнă та ĕнтĕ вăл опытлă воин, 1939 çултанпа Хĕрлĕ Çар ретĕнче, вăрçă пуçланнăранпах фронтра пурăнакан-скер.

Вăл темиçе çĕр пин минăна сиенсĕрлетнĕ. Тăшман пралукĕсене нумай татнă.

Боевой задание пурнăçланă çĕре вăл çапăçура хăй пекех хăрама пĕлмен рядовой—Сергей Барановпа пĕрле кайнă.

Пралуксене татса çул уçма тытăннă вăхăтра Большов сасартăк çĕр çумне лăпчăнса выртнă. Ăна малалла ĕçлеме май пулман. Унтан 20—25 метрта нимĕçсен пысăк ушкăнĕ траншейăсем чавнă. Разведчиксене ертсе пыраканĕ Большова сылтăм еннелле 100 метра кусма хушнă.

Çĕнĕ вырăнта вĕсене ĕçлеме меллĕрех пулнă. Çавăнпа та вĕсен çивчĕ хаçчисем пралуксене татах та хăвăртраххăн татма пикеннĕ.

Тăшман пулемечĕ вут-хĕм тăкса тăнă. Пуç çийĕпе пульăсем шăхăрса иртнĕ. Вĕсен ирĕксĕрех çĕр çумне лапчăна-лапчăна выртмалла пулнă. Çапах та вĕсем хăйсен ĕçне тума чарăнман.

Тăшман кусĕ умĕнче тенĕ пекех вĕсем пралуксем татса хăйсем валли çул уçнă, систермесĕр нимĕçсем тăракан çĕре сывхарса, пĕр нимĕçне вĕлернĕ, тепĕрне тыткăна илнĕ.

Большовпа Баранова подразделени командирĕ çав каçах III-мĕш степень Мухтав орденĕпе наградăланă. Çапла вара, вĕсем пирĕн часре Мухтав орденĕн малтанхи кавалерĕсем пулчĕç.

Тепрехинче, старшина Михаил Большов саперсен ушкăнĕпе пĕрле тăшманăн вăйлă вут-хĕмĕ витĕр пирĕн подразделение наступлени тума чăрмантаракан пралуксене 6 çĕртен татса çул уçса панă. Малтанхи стрелоксемпе пĕрлех вăл нимĕçсен траншейине кĕрсе кайнă, унта та пысăк мастерлăхпа çапăçнă. 10 нимĕçе ытла вĕлернĕ. Стрелоксем малалла кусса тăшмана хăваласа пынă. Старшина Большов хăйĕн юлташĕсем хушшинче çак вăхăтра та чи малта пулнă.

Çапăçусенче хăюллăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн командовани Михаил Большова тепĕр награда — II-мĕш степень Мухтав орденĕ парса наградăланă.

Çапла çапăçать икĕ Мухтав орденлĕ герой—чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕ старшина Михаил Алексеевич Большов.

Лейтенант И. КИРЮШКИН.

ДЕЙСТВУЮЩИ ÇАР.

Политинформацисем ирттереççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Шуршăлти туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем мухтавлă Хĕрлĕ Çар çĕнтерÿсем тунине кулленех хаçатсем тăрăх сăнаса пыраççĕ. Кунсăр пуçне, виçĕ кунта пĕрре политинформаци пулать. Юлашки информацире Хĕрлĕ Çар государство чиккине тухни çинчен ăнлантарса панă. Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕ ачасене чĕререн савăнтарать. Вĕренекенсем çитес пĕлÿ тĕрĕслевне лайăх хатĕрленсе, вĕренÿ çулне ăнăçлă вĕçлеме тăрăшаççĕ

А. КОЛЕСНИКОВ.

Шкул библиотеки

ОКТЯБРЬСКОЕ. Наратчаккинчи туллимар вăтам шкулăн (заведующийĕ И. Петров) библиотеки çулран çулах пуянланса пырать. Хальхи вăхăтра кунта 1.500 тĕрлĕ кĕнеке шутланать. Вĕсен шутĕнче Отечественнăй аслă вăрçă геройĕсем çинчен çырнă кĕнекесем, М. Горькин, Л. Толстойăн, Некрасовăн, Чеховăн, А. Толстойăн, М. Шолоховăн тата ытти писательсен паллă произведенийĕсем пур.

Вулакансен хисепĕ, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, икĕ хута яхăн ÿснĕ.

И. АНДРЕЕВ.

Ют çĕршывĕсенче

Венгри хулисенчи халăха урăх çĕре куçарни

АНКАРА, апрелĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Анатоли агентствин Будапештри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Венгри влаçĕсем хушнă тăрăх, Будапешт, Будафок, Кишпешт, Палота, Уйпешт тата ытти хуласенчи халăха та урăх çĕре куçарма пуçланă.

«Сывлăшран тапăнас хăрушлăх пур», тесе урăх çĕре куçараççĕ унти халăха.

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). «Свенска Дагбладет» хаçатăн Берн хулинчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: эпĕ пĕлнĕ шанчăклă хыпарсем тăрăх, Венгрири оппозици вăйлăнах хирĕç ĕçлеме тытăннă. Анчах оппозицие ертсе пыма чăн-чăн çулпуç çук. Вăрттăн пичетленекен хаçатсем тухса тăраççĕ. Вĕсенчен пĕри «Ирĕклĕ Венгри» ятлă. Вăл Хĕвелтухăç Венгрире тухса тăрать. «Ирĕклĕ Венгри» хаçат Венгри халăхне саботаж тума чĕнет, Тито майлă пулса, унпа килĕшсе ĕçлеме чĕнет.

Венгерсемпе словенсен ушкăнĕсем Тито енне куçнă

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Стокгольма çитнĕ хыпарсем тăрăх, «Афтонтидниген» хаçат çапла çырать: Тито енне 5.000 венгера яхăн куçнă, вĕсем хăйсемпе пĕрле çур дивизие çитмеллĕх хĕçпăшалпа снаряжени илсе пынă. Çавăн пекех Тито енне словен салтакĕсен пĕр батальонĕ куçнă, вĕсем хăйсемпе пĕрле хальхи вăхăтри чи лайăх хĕçпăшал илсе пынă.

Гитлеровецсем Венгрие çаратса çука хăварни

ЖЕНЕВА, апрелĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта çитнĕ хыпарсем тăрăх, Венгрин ялхуçалăх продукчĕсене Германие турттара-турттара кайнă пирки, Будапештра апат-çимĕç нумай çитмен. Венгрие нимĕçсем оккупациленĕ хыççăн вара Будапештра апат-çимĕç пĕтсе ларнăпа пĕрех пулнă. Гитлеровецсен «Мюнхенер Нейехте Нахрихтен» ятлă хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, юлашки кунсенче Будапештра кушаксене кус-кĕретĕнех тытма пуçланă. Кушаксене курттăм сутакан сутуçăсем те çуралса тухнă. Вĕсем кушаксене ача-пăчасенчен илеççĕ те кушак ашне хулари халăха апат пĕçерсе çиме сутаççĕ.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ГАМБУРГА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, апрелĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: апрелĕн 7-мĕшĕ ырăн тенĕ чух çĕрле Англин бомбăсем пăрахакан самолечĕсем Гамбурга тата Рурпа Рейн облаçĕсенчи объектсене тапăннă.

ВИÇĔ УЙĂХ ХУШШИНЧЕ ГЕРМАНИ ÇИНЕ 48.000 ТОННА БОМБА ПĂРАХНĂ

ЛОНДОН, апрелĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министрĕ Синклер каланă тăрăх, 1944 çулăн малтанхи 3 уйăхĕ хушшинче акăлчансен бомбăсем пăрахакан авиацийĕн самолечĕсем Германи çине 48.000 тонна ытла бомба пăрахнă. Çав вăхăт хушшинчех Англи çине нимĕçсем мĕн пурĕ те 2.400 тоннăна яхăн кăна бомба пăрахнă.

Синклер çапла каланă: март уйăхĕнче Германи çийĕнче тата нимĕçсем оккупациленĕ территори çийĕнче тунă операцисенче бомбăсем пăрахакан авиацийĕн çухатусем питĕ сахал пулнă, ун пек сахаллине юлашки 12 уйăх хушшинче урăх пулман.

НИМĔÇСЕМ БОЛГАРИН ВАРНА ПОРТНЕ ОККУПАЦИЛЕНĔ

ЛОНДОН, апрелĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Стамбулран пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсен Салоникăран çитнĕ парашютлă десант çарĕсем Болгарин Хура тинĕс хĕрринчи чи пысăк портне—Варнăна оккупациленĕ.

БРИТАНИ ИМПЕРИЙĔН ХĔÇПĂШАЛЛĂ ВĂЙĔСЕН ТĂВАТĂ ÇУЛХИ ÇУХАТĂВĕСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, общинăсен палатинче премьер-министр Черчилль çапла каланă: вăрçăн малтанхи тăватă çулĕнче Британи империйĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен мĕн пурĕ 667.159 çын каялнă, вĕсенчен 158.741 çын вилнĕ.

СТЕТТИНИУС ЛОНДОНА ПЫНĂ

ЛОНДОН, апрелĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, США-н государственнăй секретарĕн заместителĕ Стеттиниус тата унăн сотрудникĕсем паян Лондона çитнĕ.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, апрелĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: американецсен 5-мĕш армийĕн тата акăлчансен 8-мĕш армийĕн тĕп фрончĕсенче, çавăн пекех тата Римран кăнтăртарахри плацдарм çинче, патрульсем кăна çапăçнă.

Ĕнер союзниксен самолечĕсем тăшманăн Италири тата Югославири объекчĕсене чылайĕшне тапăннă.

МУССОЛИНИ «ÇАР» ПУХМА ТĂНИ ПУТЛАНСА ЛАРНĂ

СТАМБУЛ, апрелĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Итали фашисчĕсен «правительстви» çар пухма хăтланать, анчах та ĕç пачах та малалла каймасть. Çурçĕр Италире хăшпĕр тĕлте Гитлер хÿрешкисем пĕр-пĕр çар чаçĕ пухса çитереççĕ те, анчах часть çапăçма пултарассине хăйсем те шанмаççĕ. «Реджиме фашиста» ятлă хаçат Муссолинин тĕп хÿрешки пулса ĕçлекен Фариначчи фашистăн статьине пичетлесе кăларнă. Вăл хăйĕн статьинче çапла çырнă: «Час-часах салтаксем кайсен çĕршыв умĕнчи тивĕçлĕхе туймаççĕ, фашистсен çĕнĕ йĕрки çине вĕсем мĕнле шухăш-кăмăлпа пăхни те паллă мар», тет.

Италире вăрттăн тухса тăракан «Итали Либера» ятлă хаçат çапла çырса пĕлтерет: Марленгора (Больцано провинцийĕ) тата Тиранора тăракан альпийски чаçсене Наварăна куçарма приказ панă. Çул çинче çавсенчен пĕр чаçĕнчен 300 çын тарса çухалнă, тепĕр чаçран 150 çын тарнă. Тарнă салтаксемпе офицерсем партизансен отрячĕсене кайнă. Çавăн пекех Комо провинцийĕнче пухнă фашистсен çар чаçĕнчен çурри ытла партизансем патне тарса кайнă.

ТУРИН ХУЛИНЧЕ ИТАЛИ ОФИЦЕРĔСЕНЕ ЧЫЛАЙĔШНЕ ПЕРСЕ ПĂРАХНĂ

ЛОНДОН, апрелĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви, Римри радио пĕлтернĕ тăрăх çапла пĕлтерет: Турин хулинче ятарласа организациленĕ трибунал Итали çарĕнчи итальянецсен темиçе аслă офицерне (вăл шутра генералсем те пур) персе пăрахмалла тунă. Вĕсене вăрттăн ĕçлекен организацире тăнă тесе айăпланă. Çав организаци Муссолини «правительствин аслă чиновникĕсене пĕтерсе пырассишĕн» кĕрешнĕ.

ЧЕХОСЛОВАКИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВĂРÇĂ ПРЕСТУПНИКĔСЕН СПИСОКНЕ ТĂВАТЬ

ЛОНДОН, апрелĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: совет çарĕсен чаçĕсем Чехословаки чиккине çитсе пынă май, Чехословаки правительстви Чехословаки халăхĕ валли паракан радиопередачăсенче вăрçă тĕлĕшпе айăплă нимĕçсен ячĕсене пĕлтерме тытăннă. Правительство Чехословаки халăхне нацистсен чиновникĕсене асăрхаса тăма чĕнет, вĕсем тарса пытанма ан пултарччăр, тет. Радиопередачăсенче халăха çапла пĕлтереççĕ: Германие тарса кайнă айăплă çынсене те союзниксем хăйсен аллине пама ыйтĕç, теççĕ. Чехословаки правительстви вăрçă тĕлĕшпе айăплă çынсен списокне тума союзлă правительствăсем çавăн пек списоксене тума тытăнсанах пуçланă. Чехословакин шалти хăрушсăрлăх министерстви тунă списоксенче 2.000 ят ытла. Çав списоксене Чехословаки аллине вăрттăн панă хыпарсем тăрăх тата ытти майпа пухнă шанчăклă хыпарсем тăрăх тунă.

ЖИРО ОТСТАВКĂНА ТУХМА ЗАЯВЛЕНИ ПАНĂ

ЛОНДОН, апрелĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Алжиртан çапла пĕлтерет: Жиро отставкăна тухма заявлени панă, анчах та Француз халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен наци комитечĕ вăл ыйтнипе килĕшмен. Комитет Жиро генерала француз çарĕсен генеральнăй инспекторĕ пулса ĕçлеме сĕннĕ.

Грецире юлашки вăхăтра пулса иртнĕ ĕçсем

КАИР, апрелĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта çакă паллă: 1943 çулхи октябрь уйăхĕнче çав вăхăтчен Грецин Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар аллинче тăнă тата Напи фрончĕн халăх комитетне пăхăнса тăнă Самос утравĕ çине Греци эмиграцилле правительствин представителĕсем пыма пуçланă. Малтанах министр Софулис, полковник Бурдерас тата ыттисем те пынă. Вĕсем çÿлте асăннă организацисене салатса ярса, утрав çинчи администраци правине хăйсен аллине илме тата ăна Самоспа Иколин Губернаторстви тесе ят пама пикеннĕ.

Çавăн хыççăн Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн боецĕсене ирĕксĕрлесех Самос утравĕ çинчен Палестинăри Газа текен вырăнта ятарласа организациленĕ концентрацилле лагере илсе кайнă. Унсăр пуçне, Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн 5 çынтан тăракан командованине (унта çаксем кĕнĕ: Зафирис Иоанн, Зафирис Коста, Закмис, Гризакис тата Парьянос) арестлесе конвойпа Каира ăсатнă. Мартăн пуçламăшĕнче грек партизанĕсен асăннă командирĕсене Палестинăри Назарет хулинчи лагере (хăйсен çĕршывĕнчен тухса тарнă гревсен лагерьне) янă. Вĕсене халĕ те çавăнтах усраççĕ.

Çавăнпа пĕрлех Цудерос правительстви, халĕ отставкăна тухнăскер, фашистла шухăш-кăмăллă Обаруниспа (Грецин премьер-министрĕ пулнă сутăнчăкпа Чолакоглупа çыхăннăскерпе), Метаксас вăхăтĕнче фашистла çамрăксен фалангине организациленĕ Даскалатиспа, Чолакоглун çыхăну офицерĕ пулнă Пацифас офицерпа т. ыт. те килĕшÿллĕн ĕçлени паллă.

Çавăн пекех тата шанчăклă хыпарсем тăрăх çакă паллă: Цудерос правительстви, офицерсем хушшинчи фашистла элементсем çине таянса, хăйĕн политикине килĕшмен мĕнпур çынсене, çарти паллă çынсене, малтан Триполитанири, Палестинăри уйрăм гарнизонсене янă, унтан вара концентрацилле лагерьсене янă. Ун пек лагерьсенче халĕ Греци салтакĕсем 1000 çын ытла шутланаççĕ.

Юлашки вăхăтра Грецин Вăтаçĕр-хĕвелтухăçĕнчи çарĕн уйрăм чаçĕсенче пăлханусем пулнă, çар комитечĕсем тата 13 офицертан пĕтĕм çар комитечĕ туса хунă пулнă. Цудерос отставкăна тухиччен маларах ун патĕнче пĕтĕм çар комитечĕн делегацийĕ пулнă. Вăл Цудероса Грецире нумай пулмасть организациленĕ Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен политикăллă комитета, полковник Бакирдзис пуç пулса тăракан комитета, йышăнма ыйтса меморандум панă. Çав меморандум Цудероса Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен политикăллă комитетпа пĕрле халăхăн пĕрлешÿллĕ правительствине тума хушнă. Цудерос патĕнче вара Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен политикăллă комитет майлă тăракан 6 çар çыннине арестленĕ.

Çавна пула Грецин çар чаçĕсенче Греци халăхĕн мĕнпур вăйĕсене пĕрлештерме чăрмантаракан реакцилле çынсем çине, нимĕç оккупанчĕсене хирĕç кĕрешмелли программа тăвра пĕрлештерме тата халăхăн пĕрлешÿллĕ правительствине тума чăрмантаракансем çине хытă тăрăхаççĕ.

Çавăн пекех тата çакăн çинчен пĕлтереççĕ: Грецире 1943 çулта фашистла нимĕç оккупанчĕсене хирĕç кĕрешекенсенчен тата Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен Каирти Лига . представителĕсенчен Координаци Комитечĕ тунă. Çав Комитетăн представителĕсем тинĕс-çар министрĕнчен Софоил Венизелосран (ăна Цудерос вăхăтлăха премьер-министр ĕçĕсене туса пыма хушнă) çапла ыйтнă: Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен комитетăн представителĕсем çĕнĕ правительство тăвасси çинчен каласма Грецирен Каира пыриччен администраци ĕçĕсене çеç туса пыма вăхăтлăх правительство тумалла, тенĕ.

Ĕççыннисен депутачĕсен Шупашкар хули Совечĕн депутачĕсене пĕлсе тăма

1944 çулхи апрелĕн 13-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, Пионерсен çуртĕнче (Карл Маркс урамĕ, 11-мĕш çурт) ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хули Совечĕн XXIV-мĕш сессийĕ пухăнать.

Сессире çÿтсе-явма çак ыйтусене тăратнă:

1. Хула совечĕн 1942-мĕшпе 1943-мĕш çулсенчи бюджетне пурнăçа кĕртни тата 1944-мĕш çулхи бюджетне çирĕплетесси (хула Совечĕн финанс пайĕн заведующийĕ Прокопьева юлташ доклад тăвать).

2. Бюджет комиссийĕн председателĕн Зимин юлташăн содоклачĕ.

Сессие ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хули Совечĕн депутачĕсем хăйсен удостоверенийĕсемпе кĕреççĕ.

ĔÇÇЫННИ ДЕПУТАЧĔСЕН ШУПАШКАР ХУЛИ СОВЕЧĔН ИСПОЛКОМĔ.

Машур юнĕшĕн

— Эсир чăваш-и?—сулахай аллине кăнтарчĕ ман паталла çывхарса пыракан çамрăк, эпир чăвашла калаçнине илтсен.

— Чăвашсем,—терĕмĕр эпир.

Вăл ыратакан аллине фуфайка çаннипе хĕстерсе хучĕ те савăнăçлăн кулса ячĕ.

— Аçтисем?..

Çак самантра пирĕн тупăсем каллех çĕр çĕмĕрсе нимĕçсем çине снарядсем вăркăнтарма пуçларĕç. Сылтăм енче «Катюша» кĕрлет. Çав вăхăтрах фронт енчен тупăсен сасси илтĕнме пуçларĕ

— Охо!—терĕ пирĕн юлташ,—нимĕçсен «Скрипухи» «Катюшăпа» тавлашма пуçларĕ.

— Пуçланчĕ, — тетпĕр ăна хирĕç.

Вăхăтлăха калаçу чарăнчĕ. Виççĕмĕр те пирус чĕркесе ятăмăр. Чĕлĕм туртнă май, пĕр-пĕрине паллашма тытăнтăмăр. Вăл Куйбышев облаçĕнчи чăваш иккен, Викторов хушаматлă.

Калаçу хĕрсе пынă вăхăтра манăн юлташ унтан: — Аллуна паянхи çапăçура суранларăн-им? — тесе ыйтрĕ.

Ку ыйту Викторов чĕринех пырса тиврĕ пулас, унăн пичĕ çине хаяртăх ĕмĕлки ÿкрĕ.

— Паян,—терĕ вăл. — Паян суранланчĕ алă. Ахаллĕн Машур юнĕшĕн нимĕçсене каçченех тавăрнă пулăттăм..

— Машур сан юлташу пулĕ-çке?

— Акă ларарха çак хыр кутне, калаçăпăр, — терĕ вăл.

Эпир çÿлĕ хыр кутне пухăнса лартăмăр.

— Паян ирхине пирĕн артиллери нимĕçсене сехет çурă хушши кисретнĕ хыççăн атакăна карăмăр. Тĕттĕм-ха. Вăрмана шурă чатăр тейĕн, тĕтре витсе тăрать. Эпир шурлăх урлă, вăрман витĕр нимĕçсен траншейи патнелле шуса пыратпăр. Нимĕçсен ултă кĕпçеллĕ миномечĕ пирĕн çине вĕçĕ-хĕррисĕр мина тăкать. Пĕлĕтрен пăр çунă чухнехи пек пуля тăкăнать. Эпир çаплах малаллах шăватпăр.

Унччен те пулмарĕ гранатăсем вăркăна-вăркăна иртме пуçларĕç, пĕр харăс «урра!» янăраса кайрĕ. Малалла ыткăнса пыратпăр. Акă манпа юнашар чупакан казах—Мингалеев Машур—нимĕçсен траншейине сикрĕ. Эпĕ—ун хыççăн.

— Иптеш Викторов — малалла!—кăшкăрать вăл.

Траншея тăрăх чупатпăр. Акă пĕр нимĕçĕ пуçхĕрлĕн тăрăнса аннă, лере виç-тăватташĕ çапкаланса выртаççĕ. Вилĕсем урлă чупатпăр. Пăхатăп: нимĕçсен пулеметчикĕ пирĕннисем çине пĕр чарăнмасăр перет. Эпир ун хыçĕнче, вăл пире асăрхамасть. Хир качаки пек, иккĕ-виççĕ сикрĕ те Машур, нимĕç салтакне прикладпа çапса амантрĕ.

— Гитлер капут! — аллине çĕклерĕ нимĕç.

— Гитлер в Берлин сидит. Ему потом капут, тебе теперь капут. Капут так вот и капут!—Пăшал пульли шуçран çитсе çапнипе, нимĕç лапăлатса ÿкрĕ.

... Пирĕннисем, траншея урлă каçса, вăрман еннелле чупаççĕ. Вăрман çулĕпе нимĕç салтакĕсем тараççĕ...

Сулахайран пирĕн часть çине минометран пеме пуçларĕç. Малтан мар, хыçалтан.

— Нимĕçсем! — кăшкăрса ячĕ Машур.

Иксĕмĕр те, траншейăна хĕсĕнсе юлнă нимĕç минометчикĕ патне хырăмпа шăватпăр. Акă икĕ-виçĕ метр çеç юлчĕ.

— Капут вĕт, тĕнче каяшĕ, — кăшкăрать Машур, хăранипе чĕтренĕ ернĕ нимĕçе.

Нимĕç вилли урлă мал еннелле чупатпăр. Эпĕ, ывăннипе, чарăнса тăтăм. Машур та чарăнчĕ. Унччен те пулмарĕ нимĕçсен засадăра тăнă танкĕ тикĕс çĕре шуса тухрĕ те вут-хĕм тăкма пуçларĕ. Эпир çĕр çумне лапчăнтăмăр. Танк — пиртен пĕр вăтăр метрта.

— Иптеш, — терĕ Машур, — пар икĕ граната, манăн виççĕ пур: эпĕ çак танк патне шуса кайса, ăна казахла ачашлам.

Машур шуса пырать. Пăхатăп: танк патне çитесси çирĕм метр. Çÿç-пуç вирĕлле тăчĕ.

— Эй, — кăшкăратăп, — Машур! танк айне пулатăн, пер-лер гранатуна хăвăртрах!

Вăл илтмест пулас — хирĕç чĕнмерĕ. Çав вăхăтра шăпах гранатисене вăркăнтарчĕ. Çĕр чăмăркки-сем сывлăшалла çĕкленнĕ вырăнта нимĕç танкĕ кăлтăрмач пек çаврăнса илчĕ те чарăнчĕ.

— Урра! — чупатпăр танк патне. Машур ăнсăртран çĕр çине тĕшĕрĕлсе анчĕ. Нимĕç офицерĕ, люкран пуçне кăларнă та, мана пеме хатĕрленет. Пĕрре сиксех танк патне çитсе ÿкрĕм.

Пăхатăп: танк ăшĕнчи пулемет пирĕннисем çине перет. Мĕн тăвас?

— Прикладпа çапса пулемет кĕпçине кукăртса хурас! — тесе такам каланăннах туйăнчĕ.

Прикладпа çапрăм, — пулемет кĕпçи авăнмарĕ. Чим-ха, урăхла тăвас эппин. Тумтирпе хыврăм та танкист пăхакан шăтăка витсе хутăм. Пулемет ĕçлеме чарăнчĕ.

— Аха, — тетĕп, — вот сире мĕн килĕшмест! Вара танкăн ытти шăтăкĕсене те питĕрме тытăнтăм. Çав вăхăтра танкист шăтăкран пистолетпа персе алла амантрĕ курăнать. Ну, сывалĕ-ха алă, Машур юнĕшĕн тавăрăп хура тăшмана!

Вăрманти йывăççем Машур вил тăприне чыс туса хумханнăн туйăнчĕç. Сулхăн çил инçетри Казахстан хирне хăйĕн паттăр ывăлĕн паттăрла вилĕмĕ çинчен хыпара илсе кайнăн туйăнчĕ...

— Ну, юлташсем, сывă пулăр-ха, —терĕ Викторов, — манăн сурана çыхтарма каяс-ха..

Пĕр-пĕрин аллине чăмăртаса уйăрăлтăмăр. Çапăçу хĕрсе пырать. Унта та кунта тĕтĕм мăкăрланса пĕлĕтелле çĕкленет.

Нимĕçĕн ури тупанĕ çеç купарчине çапăнса пырать,—терĕм эпĕ.

Тарать фриц!

И. ЮРИН-КАШЛИНКЕ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Чебторга экспедиторсем, бухгалтерсем, калькулятор, зоотехник кирлĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, ул. Ленина, 11, Чебторг. 2—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00410 Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6, 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.